Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

103 (7528) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи декабрĕн (раштав) 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Халăх хăйĕн сăмахне каларĕ

### РАÇÇЕЙРЕ

Тунти кун РФ Тĕп суйлав комиссийĕн ертӳçи Владимир Чуров РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕн малтанласа тунă итогĕсемпе паллаштарчĕ.

Суйлава пĕтĕмпе суйлавçăсен 63,7 проценчĕ хутшăннă. 2003 çулхи суйлавра 55,8 проценчĕ сасăланăччĕ. Апла пулсан суйлавçăсен активлăхĕ ӳсни куç кĕрет. Вĕсене çĕршыв шăпи чăннипех шухăшлаттарать.

Çĕршыв парламентне пĕтĕмпе 4 парти суйланнине палăртмалла. Вĕсемшĕн суйлавçăсем çапла сасăланă:

**"Единая Россия"** – 64,1 процент;
**КПРФ** – 11,6 процент;
**ЛДПР** – 8,2 процент;
**"Справедливая Россия"** – 7,8 процент.

Суйлавçăсен 7 процент сассине пухайманран парламента лекеймен партисемшĕн çапла сасăланă:
"Аграрная партия России" – 2,3 процент;
"Яблоко" – 1,6 процент;
"Гражданская сила" – 1,1 процент;
СПС – 1 процент;
"Патриоты России" – 0,9 процент;
"Партия социальной справедливости" – 0,2 процент;
"Демократическая партия России" – 0,1 процент.

Çапла вара пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Думи 4 партирен тăрать. Малтанласа шутласа пăхнă тăрăх "Единая Россия" 315 депутат вырăнне йышăнать, КПРФа 57 мандат тивĕçет, ЛДПРа – 40 мандат, "Справедливая Россия" 38 вырăна йышăнать.

Парламента кĕме тивĕç пулнă çак 4 партишĕн суйлавçăсен 91,7 проценчĕ сасăланă. Иртнĕ 2003 çулхи суйлавра çак кăтарту 70,7 процентпа çеç танлашнăччĕ.

### ЧĂВАШ ЕНТЕ

ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн ертӳçи Людмила Линик декабрĕн 3-мĕшĕнче ирттернĕ пресс-конференцире республикăра иртнĕ суйлавăн малтанхи итогĕсемпе паллаштарчĕ.

Пирĕн республикăра та "Единая Россия" малта пырать. Уншăн суйлавçăсен 62,28 проценчĕ хăйсен сассине панă. Ку иртнĕ суйлавринчен 24 процент нумайрах. Иккĕмĕш вырăнта – КПРФ. Уншăн суйлавçăсен 12,64 проценчĕ сасăланă. Коммунистсем 2003 çулхи суйлавра 17,3 процент пухнăччĕ. Виççĕмĕш вырăна пирĕн республикăра "Справедливая Россия" парти тухнă: 10,32 процент. Тăваттăмĕшĕнче – ЛДПР. Уншăн вара суйлавçăсен 8,47 проценчĕ сасăланă. Ытти партисенчен кашнишĕн суйлавçăсен 2 проценчĕ те сасăламан.

Суйлава пĕтĕмпе суйлавçăсен 70,6 проценчĕ хутшăннă. Çак кăтарту унччен хи суйлавринчен чылай пысăк. Республикăри суйлавçăсем яваплăха туйса, пысăк пуçарулăхпа суйлава хутшăннине палăртмалла.



### МУРКАШ РАЙОНĔНЧЕ

Районти территори суйлав комиссийĕн итогĕсем тăрăх пирĕн районта суйлавçăсен 82,07 проценчĕ суйлава хутшăннă. 2003 çулхи суйлавра ку кăтарту – 60,03 процентпа танлашнăччĕ.

Муркаш районĕнчи суйлавçăсенчен ытларахăшĕ – "Единая Россия" партишĕн сасăланă – 69,15 процент. Иккĕмĕш вырăнта – КПРФ. Коммунистсемшĕн суйлавçăсен 10,08 проценчĕ сасăланă. Виççĕмĕшĕнче – ЛДПР. Жириновский партишĕн суйлавçăсем хăйсен сассине 8,05 процент панă. Тăваттăмĕшĕнче – "Справедливая Россия". Уншăн суйлавçăсен 7,28 проценчĕ сасăланă.

**Районти территори суйлав комиссийĕн итогĕсемпе тĕплĕнрех 2-мĕш страницăра паллашăр.**

**Мартăн 2-мĕшĕнче – РФ Президенчĕн суйлавĕ**

## Президент суйлавĕн кампанийĕ пуçланчĕ

Чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче Раççейре çĕршыв Президенчĕн суйлавĕн кампанийĕ пуçланчĕ. РФ ТСК пуçлăхĕ Владимир Чуров палăртнă тăрăх, çитес вăхăтрах "Президент пуканĕшĕн" тупăшас текенсем хăйсен кандидатурине тăратма тытăнаççĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн, Раççей гражданĕсем хăйсен кандидатурине сĕнсе суйлава хутшăнма пултараççĕ. Вĕсен 500 суйлавçăран тăракан пуçару ушкăнне йĕркелемелле çеç. Кандидатсене партисем те тăратма пултараççĕ. Суйлавра регистрациленме документсен пуххине хатĕрлемелле, çав шутра – кандидатăн тупăшĕ тата пурлăхĕ пирки калакан хутсем те. Кунсăр пуçне 2 миллион суйлавçăн çак кандидата хирĕçлеменнине алă пусса ĕнентермелле. Президент суйлавĕнче çак процедурăран салукпа хăтăлма çук, пĕлтерет "Новости" РИА. Хăйсен кандидатурисене сĕнекенсене – документсене раштав уйăхĕн 18-мĕшĕччен, парти кандидачĕсен раштав уйăхĕн 23-мĕшĕччен хатĕрлесе çитермелле. Çапла вара патшалăх ертӳçин должноçĕшĕн тупăшакансен йышĕ çĕнĕ çулччен паллă пулать. Официаллă йĕркепе çирĕплетнĕ списокпа кăрлач уйăхĕн вĕçĕнче паллашма май килĕ.

Президент суйлавĕнче çĕнтерме кандидатăн 50 процент тата 1 сасă пухмалла. Пĕри те çак виçерен иртеймерĕç пулсан, виçĕ эрнерен сасăлавăн иккĕмĕш тапхăрĕ иртет. Унта пĕрремĕш тапхăрта пуринчен те ытларах сасă пухнă икĕ кандидат хутшăнать.

Агитаци тапхăрĕ кандидатсене тăратнă хыççăн пуçланать те сасăлавччен пĕр кун маларах вĕçленет. МИХсенче суйлав умĕнхи агитаци нарăс уйăхĕн 2-29-мĕшĕсенче пырĕ. Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ – "шăплăх кунĕ". Раççей ТСК пуçлăхĕ каланă тăрăх, суйлав ирттерме патшалăх бюджетĕнчен 5,2 миллиард тенкĕ уйăрнă. Çак укçа-тенкĕ иккĕмĕш тапхăра ирттерес пулсан та çитмелле. Енчен те çĕнтерӳçĕ пĕрремĕш тапхăртах паллă пулсан, юлнă укçана çĕршыв бюджетне тавăрса парĕç.

РФ Президенчĕн суйлавĕ пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче иртĕ.

**«Çавра сĕтел» тавра**

## Ялсене çĕнĕлĕх сăнĕ çапать

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин ларусен залĕнче "АПК аталанăвĕ" приоритетлă наци проекчĕ республикăра еплерех ĕçленине сăнлакан массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçченĕсем "Çавра сĕтел" хушшине пуçтарăнчĕç. Чи малтанах ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, культура министрĕ Н.И. Володина сăмах илчĕ. Регионти прессăн "АПК аталанăвĕ" приоритетлă наци проектне вăя кĕртес ĕçри витĕмлĕх тавра калаçрĕ. "Пирĕн, журналистсен, ял хуçалăхĕ чăннипех те аталанма пуçланине ял çынни ăнланма пултаракан чĕлхепе тĕрĕс те туллин уçăмлатма пултармалла", – терĕ.

Ял хуçалăх министрĕ М.В. Игнатьев ку тĕлĕшри аталанăва тĕрлĕ çĕнĕлĕхсемпе, цифрăсемпе çирĕплетрĕ. "Хушма хуçалăхсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, ял хуçалăх потребительсен кооперативĕсем самай малалла туртăнчĕç. Кунта вара тĕп пулăшуçă патшалăх палăртнă çăмăллатнă кредит пулса тăчĕ. Çавна май ал ĕçĕ те механизм вăйĕ çине куçса пырать. Раççей Правительстви ял хуçалăх аталанăвĕшĕн çирĕп утăмсем тума палăртать. Акă ку тĕлĕшри ятарлă программăпа килĕшӳллĕн АПКна аталантарма 80 миллиард тенкĕрен 120 миллиард тенкĕне çити хăпартма пăхнă. Апла пулсан унпа вырăнлă усă курма пултармалла. Республикăри уй-хирсенче çĕр ĕç культури те ӳссех пырать. Хальлĕхе çĕр ĕçченĕ пырса тивмен çĕр лаптăкĕсем пур-ха пирĕн, малашне вара çавăн йышши çĕрсене пачах та хăвармалла мар тесе тĕллев лартнă. Ял хуçалăхĕ валли кирлĕ кадрсем тĕлĕшпе те çине тăрсах ĕçлетпĕр, вĕсене тĕрлĕ енлĕ интереслентерме тăрăшатпăр, çапла майпа çамрăксем çак отрасль патне ытларах туртăнччăр тетпĕр", – терĕ вăл.

«Россельхозбанк» филиалĕн ертӳçи И.Н. Письменская та ял хуçалăх аталанăвĕ пирки тĕплĕн каларĕ. Малашне ял хуçалăх академийĕнче "ялти банкир" специальноçа хатĕрлессине пĕлтерчĕ, çакă вара эксперимент шучĕпе пулĕ. Çавăн пекех журналистсене ял, хушма хуçалăх аталанăвĕ çинчен ытларах та ытларах çырма сĕнчĕ.

Раççей аграри журналисчĕсен Ассоциацийĕн ĕç тăвакан директорĕ А.Н. Смородов Чăваш Ен чылай енĕпе ытти тисемшĕн ырă тĕслĕх пулнине палăртрĕ. «Çакă вара чи малтан сирĕн президент тӳпи, вăл лару-тăрăва тĕрĕс йĕркелеме пĕлни», – терĕ вăл.

Çавăн пекех ларура ытти ыйтусене те хускатрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне**

## Пĕчĕк бизнесăн пĕлтерĕшĕ пысăк

***Районăн экономики çулсеренех çирĕпленсе пырать. Кунта вара пĕчĕк формăллă хуçалăхсен тӳпи те пĕчĕк мар. Вĕсен йышĕ те юлашки вăхăтра ӳссех пырать. Ку вара тепĕр проблемăна та татма пулăшать: вĕсенче ĕçлекенсен йышĕ те ӳссе пырать, апла пулсан çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тупăнаççĕ. Тĕплĕнрех вара сире кун çинчен район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. СИМАКОВА каласа парĕ:***

– Пĕчĕк формăллă предприятисем кăларакан продукцисен, вĕсем паракан пулăшусен ассортименчĕ те, вĕсен пахалăхĕ те ӳссех пырать. Çĕнĕ технологипе ĕçлени çапла тума пулăшать те вĕсене.

Паянхи куна районта пĕтĕмпе пĕчĕк предприятисем 91, уйрăм предпринимательсем 598ăн, ял хуçалăх потребительсен кооперативĕсем 18, килти хушма хуçалăхсем вара 13303. Пĕчĕк формăллă хуçалăхсенче пурĕ 2008 çын ĕçлет. Ку вăл район экономикишĕн тăрăшакансен пĕтĕм йышĕн 15 проценчĕ пулать. Пĕчĕк формăллă хуçалăхсем хăш сферăра ытларах пулнине çак цифрăсем кăтартса параççĕ: суту-илӳпе обществăлла апатлану сферинче – 41 процент, промышленноçра – 27 процент, ял хуçалăхĕнче – 20 процент, строительствăра –15 процент.

**– Эльвира Иосифовна, килти хушма хуçалăх паян ял çыннишĕн хăйĕншĕн укçа-тенкĕ çăлкуçĕ пулса тăрать. Çакăн çинчен уйрăммăн чарăнсан аванччĕ.**

– Ял хуçалăх продукцийĕн иккĕ виççĕмĕш пайне килти хушма хуçалăхсенче туса илеççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне граждансен хуçалăхĕсенче 12670 мăйракаллă шултра выльăх, вăл шутран 8246 ĕне (ку вăл районти пĕтĕм ĕнесен йышĕн 71 проценчĕ пулать), 8154 пуç сысна (33 процент), сурăхсемпе качакасем 10553 пуç (96 процент). Районта туса илекен аш-какайăн 54, сĕтĕн 75, çĕр улмин 65, пахча çимĕçĕн 95, çăмартан 2 процентне килти хушма хуçалăхсенче туса илеççĕ.

Пĕтĕмпе районти пĕчĕк формăллă пур предприятисем кăçалхи 10 уйăхра 120 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, пулăшу панă. Килти хушма хуçалăхсенче вара 559 миллион тенкĕлĕх продукци туса илнĕ. Асăннă секторта туса илнĕ продукцие пĕчĕк бизнес представителĕсемпе Чăвашпотребсоюз предприятийĕсем халăхран пуçтараççĕ. Иртнĕ çулхи 9 уйăхпа танлаштарсан, кăçал çак хушăра сĕте 31, аш-какая 12 процент ытларах пуçтарнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Депутатсен районти Пухăвĕнче**

## Районăн 2008 çулхи бюджетне йышăнчĕç

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 22-мĕш ларăвĕ пулса иртрĕ. Унта депутатсемсĕр пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов тата район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хутшăнчĕç.

Чи малтанах унта район Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртрĕç. 2 тата 3 ыйтусемпе районăн 2008 çулхи экономикăпа социаллă аталану прогнозне тата районăн 2008 çулхи бюджетне тĕплĕн сӳтсе явса йышăнчĕç.

– Паян районшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ йышăнусем тăватпăр, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов. – Паянхинчен лайăхрах ĕçлесен, мĕн палăртни пурнăçланать.

– Хамăрăн йышăнакан задачăсем пурнăçланччăр тесен, паян мĕн йышăннине çакăнтан пĕлме залра пулмаллаччĕ, – терĕ Юрий Александрович депутатсен Пухăвĕн ларăвне килмен хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе ял хуçалăх ертӳçисем пирки.

Ларура çавăн пекех депутатсен районти Пухăвĕн çитес çулхи ĕç планне йышăнчĕç. Кун йĕркинчи ытти ыйтусемпе пурăнмалли çурт-йĕре тытса тăмалли тата юсамалли тӳлеве çирĕплетрĕç, инженери ифраструктурин объекчĕсене Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчен ял тăрăхĕсен муниципаллă харпăрлăхне куçарма йышăнчĕç, район администрацийĕн финанс пайĕ çинчен калакан положение çирĕплетрĕç. Çавăн пекех депутатсен районти Пухăвĕн малтанхи ларăвĕсенче тунă хăш-пĕр йышăнусене улшăнусем кĕртрĕç.

**Депутатсен районти Пухăвĕн решенийĕсемпе паянхи (2 стр.) тата малашнехи номерсенче паллашăр.**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*

Хаклăран та хаклă çыннăмăра – аннене, хунямана, асаннене – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Нина Ивановна ИВАКОВАНА** декабрĕн 7-мĕшĕнче 75 çулхи юбилейĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçу çăмăл килмерĕ пулин те, эсĕ кирек епле ĕçрен те хăраса тăмарăн, ĕмĕр тăршшĕпех тăван хуçалăхра ырми-канми вăй хутăн. Сана малашне те тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, нумай çул тăванусене савăнтарса пурăнма çирĕп сывлăх, тумхахсăр кун-çул, тулли телей сунатпăр, çывăх тăванусене пулăшса пынăшăн сан вăй-хăвату ӳссе пытăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр.



Такăр пултăр сан çулу ялан,
Пирĕншĕн эс хаклă ылтăнтан.
Пурăнма вăй-хал паран ялан,
Тав сана пуриншĕн те чунтан.
Эпир сана юрататпăр, хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, ывăлĕпе кинĕ, кĕрӳшĕ тата 8 мăнукĕ, тăванĕсем.**

## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**